Материал представлен из коллекции электронной библиотеки «Писатели Чувашии – детям» – pchd21.ru
Электронная библиотека создана Чувашской республиканской детско-юношеской библиотекой – www.rdub21.ru – на средства гранта Президента Российской Федерации для поддержки творческих проектов общенационального значения в области культуры и искусства

**Автор: Александр Алексеевич Галкин**
**Книга: Çунатлă Улăп=Крылатый Улып**
**Сказка: Нюх-Нюх сăмси мĕншĕн пуклак**

Ку вăл тахçан авалах пулнă. ӳнтанпа, тен, çĕр çул та, пин çул та иртнĕ пуль.

Шăрпăк пек шĕвĕр сăмсаллă пĕр сысна çури, Нюх-Нюх ятлăскер, мăннисем мĕн калаçнине вăртăн итлеме юратнă. Ялан алăк хыçĕнче йăпшăнса тăнă вăл.

Пĕррехинче Нюх-Нюхсем патне чаплă кӳмепе чаплă хăна килсе çитнĕ. Хăмпă пек çавракаскер, кӳминчен аран йăраланкаласа тухнă вăл. Нюх-Нюхăн ашше-амăшĕ хирĕç тухсах кĕртсе илнĕ ăна, хултан тытса пӳрте çавăтса кĕнĕ. Сĕтел хушшине кĕртсе лартнă та ун умнее тем тĕрле апат-çимĕç кăларса тултарнă – юмансĕтел кĕç-вĕç авăнса анать тейĕн. Хăна вара савăнсах апата пикеннĕ: чаплатарнă кăна çĕрулми шаркуне.

Ĕçкелесен-çикелесен, пӳртре шавлă калаçу тапраннă. Чаплă хăна никама сăмах памасăр нăрхлатнă: тем те пакăлтатнă вăл, чĕлхи унăн йăлтах вĕçерĕнсе кайнă. Кĕçех тата хăйне кура маар çинçешке сассипе »рă та ĕнеркелесе янă:

Нăрик кăна нăрик юррăм пур,
Унран пахи, тусАм, эп пур!.. –

тенĕ вăл хавассăн.

Нюх-Нюх ашшĕ чаплă хăнана ырлакаласа çеç ларнă. Лешĕ нăрăхлатсан, вăл та нăрăхлатнă, анаслансан – анасланă, кулсан – чарăна пĕлмесĕр ахăлтатнă.

Нюх-Нюх çаксене алăк хыçĕнче каçса кайсах итлесе тăнă, хăй ăçтине те мансах кайнă.

Анчах…нумаях тĕлĕнеймен çав Нюх-Нюх. Картишне тухма тăнă чаплă хăна алăка вăш уçса янă та Нюх-Нюха сăмсинчен çат тутарнă.

– Нăр-р-рик – тени çеç илтĕнĕ алăк хыçĕнче. Пăхнă та хытсах кайнă: Нюх-Нюхăн шĕвĕркке сăмси пăхăр укçа пек лапчăннă ларнă! Авкаланнă çеç Нюх-Нюх ыратнипе, ниçта кайса кĕрейми çихĕрнĕ. ăнчах сăмси, тем тусан та, вырăна ларайман…

–Эх, Нюх-Нюх! Мĕн чухлĕ каланă пуль сана алăк хыçĕнче ан тăр тесе. Сăмсасăр юлтăн вĕ-ĕ-ĕт, – шелленĕ ăна ашшĕ-амăшĕ, чунтан ачашласа. Анчах мĕн тăван-ха пĕр лапчăннă сăмсана?

Çавăнтан пуçланса кайнă та ĕнтĕ пуклак сăмсаллă нюх-нюхсем. Ăнланмалла-и?

Все тексты взяты из открытых источников и выложены на сайте для не коммерческого использования.
Все права на тексты принадлежат только их правообладателям.